НОМЕРТЕ:

ПУБЛИЦИСТИКА

Георгий Краснов	1	«Çĕнĕ те пултаруллă, хастар та пуçаруллă...» *Асаилӳ*
Михаил Васильев	6	Тăван журнал çывăхлатать. *Тĕрленчĕк*
Петр Львов	7	Пурин çинчен те шухăшлар. *Сĕнӳ*
А. Александрова	7	Кăмăлтан. *Саламлă çыру*
Алина Петрова	7	Пулăшсамăр. *Ыйту*
Порфирий Афанасьев	39	Çӳллĕ вĕçев. *Асаилӳ*
Петĕр Ялгир	41	Пурнăçĕ – кĕнекисенче. *Асаилӳ*
Василий Велвокай	42	Вутра çуралнă юрату. *Асаилӳ*
Георгий Федоров	56	«Шухăшăмсăм, шухăш! Хурлăхпа ан хутăш», е «Тан тапнă» самана. *Тĕпчев*
Юрий Айдаш	61	Сӳнме парас марччĕ. *Тишкерӳ*
Елена Абрамова	64	Литература куçарăвĕпе шкул вĕрентĕвĕ. *Тишкерӳ*
Оксана Александрова	70	Учитель. *Тĕрленчĕк*

ПРОЗА

Сергей Павлов	8	Авăр. *Роман*
Елен Нарпи	52	Çылăхлă укçа. *Калав*
Иван Тенюшев	66	Чăваш Чиканĕпе чĕвĕлчĕвĕл Чекеç. *Легенда*

ПОЭЗИ

Анатолий Ыхра	37	Пурăнас килет. *Сăвă*
Алина Павлова	37	*Сăвăсем*
Ирина Степанова	38	*Сăвăсем*



Георгий КРАСНОВ, Чăваш халăх писателĕ:

«ÇĔНĔ ТЕ ПУЛТАРУЛЛĂ, ХАСТАР ТА ПУÇАРУЛЛĂ...»

Георгий Васильевич Краснов пысăках мар çавра сухаллă, кĕл тĕсĕ çапнă илемлĕ мăйăхлă, çитмĕлелле çывхаракан, сылтăм ури хуçăлнă пирки туяпа васкамасăр çӳрекен, çивĕч хура куçлă, çирĕп кĕлеткеллĕ арçын. Чăваш Республикин халăх писателĕ. Ĕçлет-ха, Чăваш патшалăх университечĕн журналистика кафедрин профессорĕ вăл, филологи наукисен кандидачĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен малтанхи тапхăрĕнче вара «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçлеме тивнĕ унăн. Унтанпа вăхăт сахал мар иртнĕ пулин те, çав çулсенче «Тăван Атăла» юратса вуланă çынсене, çавăн чухне унта пичетленнĕ литература произведенийĕсене халĕ те кăмăлласа аса илекенсене курма пулать.

Георгий Васильевича тӳрех тупма май килмерĕ, çулĕсене кура мар хастар этем иккен вăл. Малтан, паллах, ăна университетра тĕл пулас терĕмĕр. Кая юлтăмăр, пĕрремĕш курс студенчĕсемпе лекци ирттерсен вăл факультетра кăçал вĕренсе тухакансен ушкăнĕпе квалификаци ĕçне (диплом ĕçне) пысăк пахалăхпа мĕнле çырмалли çинчен калаçса-канашласа ларчĕ, унтан Чăваш наци лицейне çул тытатăп терĕ. Лицейра Г.В.Краснов литература творчествин учителĕнче вунă çул ытла ĕçленине илтнĕччĕ-ха эпир, çавăнпа унта ăна курма май пулатех тесе шутларăмăр. Çук, тĕл

пулаймарăмăр. Ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Г.Л.Никифоров пире темĕншĕн пăртак шелленĕн пăхса илчĕ.

– Ак çак ал çырăвĕсене пăхса-тишкерсе лартăмăр унпа, – терĕ вăл купа çыру еннелле пуçĕпе сĕлтсе. – Сирĕн пата, университета, куçиччен кунта вăл ачасен пултарулăхне ÿстерес шутпа сăвă-калав çыракансен конкурсне ирттерес ĕмĕтпе хавхаланса-çĕкленсе ĕçлерĕ-ĕçлерĕ те (чи хастаррисене лицейĕн 8,9, 10 класĕсене вĕренме чĕнсе илетчĕ вăл), пĕррехмĕш конкурс ирттерсе те пăхрăмăр. Республика шкулĕсенче вĕренекенсенчен ун чухне 100 ытла сăвă, калав, пьеса (50 ачаран) илтĕмĕр. Ку ĕçе ытти çулсенче майĕпен Вĕрентÿ министерствине, Писательсен союзне, «Тантăш» хаçата явăçтартăмăр. Кăçалхи конкурс – тăххăрмĕш, унта çĕр ачаран çĕре яхăн материал килчĕ. Г.В.Краснов жюри председателĕн çумĕ. Халĕ вăл кĕнеке издательствинче пулĕ-ха, çавăнта каяс пек асăнчĕ.

Çитрĕмĕр издательствăна. Унăн директорĕ В.П.Комиссаров пире кулкаласа пĕлтерчĕ: «Пулчĕ кунта. Эпир унпа çĕнĕ кĕнекесен ал çырăвĕсем çинчен сăмах хускатрăмăр. Сирĕн профессор питĕ пултаруллă, канма пĕлмен çын. Чăваш писателĕсен вăрçă очеркĕсем çинчен монографи çырса пĕтерет, çав тĕпчев ĕçне вĕçлемешкĕн хăш-пĕр материалсем çитмеççĕ-ха тесе республика наци библиотекине кайрĕ кунтан. Унта вăл тĕпленсех ларать пулĕ-ха, тĕл пулса калаçатăр».

Издательство директорĕ тĕрĕсех каланă. Библиотекăн чăваш литературин пайĕнче ĕçлесе ларать иккен Г.В.Краснов, эпир хăйне мĕншĕн шыранине пĕлсен малтан кăшт иккĕленсе те илчĕ, пулăшайăп-ши терĕ. Унтан темĕнле çирĕп шухăш тытрĕ те умĕнчи кĕнеки-хучĕсене кăшт аяккалла куçарса хучĕ. Тинех калаçу-интервью пуçланчĕ.

– Эсир Чăвашрадиопа Писательсен союзĕнче ĕçленĕ хыççăн урăх мана ĕç кирлĕ мар, килте çес çĕнĕ кĕнекесем çырса ларма тытăнатăп тенĕ тесе асăнаççĕ. Хăвăр вара «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕн ĕçне сыраннă...

– Тĕрĕсех асăннă... Чăвашрадион пур редакцийĕнче ĕçлесе тухрăм: тĕп редактора та, Телерадиокомитет председателĕн çумне те лартрĕç. Ку ĕç вырăнĕсем питĕ яваплă, çавăнпа литература ĕçĕпе çыхланма пушă вăхăт пачах юлмасть. Ирĕксĕрех ĕçрен хăтарма ыйтмашкăн тиврĕ. Анчах парти обкомĕнче (ун чухне вăл пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пыратчĕ) урăхларах шутларĕç: çамрăкрах-ха профессионала куçма терĕç те, писательсен съездĕнче мана правлени яваплă секретарьне суйларĕç. Нимĕн те тăвайман – ĕçлемелле. Каллех кĕнеке çырма вăхăт юлмасть. Унта тепĕр съезд çитиччен вăй хумах тиврĕ. Ну, тетĕп, текех кунта лармастăп, капла эпĕ çырас тенин чĕрĕкне те пурнăçа кĕртейместĕп. Çук, каллех май килмерĕ, обком алли çирĕп, ăна хирĕç каяймастăн – чĕнтерчĕç те унта: «Редакторта ĕçлеме тивет, – терĕç. – Хăть «Ялав» журнала, хăть «Тăван Атăла» суйласа ил, икĕ редакторне те улăштармалла», – теççĕ. «Ялавра» Ю.Сементер ĕçлетчĕ, ăна ĕçрен хăтарма шутлани мана питĕ тĕлĕнтерчĕ. Çавăнпа çаплах каларăм: «Ю.Сементерĕн, ман шутпа, хăйĕн вырăнĕнчех юлмалла, манăн «Тăван Атăла» йышăнма тивет. Унта тĕп редакторта А.Галкин поэт ĕçлетчĕ. Чăнах та, редакцинчи лару-тăру çăмăлах марччĕ, Писательсен союзĕн правленийĕн ларăвĕнче те пăхса тухма тивнĕччĕ журнал ĕçне. А.Галкин хăй те, çавна кура, ĕçрен кăларма ыйтнăччĕ. Ун вырăнне йышăнма килĕшме тиврĕ вара...

– Авă еплерех пулса иртнĕ иккен ĕçсем... Редакцире ĕçе тытăнсан, эсир: «Пирĕн тĕп тĕллев – журнал тиражне «Коммунизм ялавĕ» хаçат тиражĕпе танлаштармалла», – тенĕ пулать... Тĕрĕсех-и?

– Тĕрĕсех. «Коммунизм ялавĕн» (хальхи «Хыпар» хаçат) тиражĕ ун чухне 70 пинччĕ, «Тăван Атăлăн» – 34 пин. Анчах ку тĕллеве пурнăçлама çăмăл марри тÿрех сисĕнчĕ.

Редколлегие çĕнетрĕмĕр. Редакцин яваплă секретарĕ пулма Н.Григорьев критика, поэзи пайĕн редакторĕ пулма çамрăк та талантлă поэта Л.Мартьяновăна, публицистика пайне ертсе пыма çамрăк публициста Г.Желтухина çирĕплетрĕмĕр. Проза пайне В.Игнатьев, критикăпа библиографи пайне А.Малов ертсе пыма тытăнчĕç. Тĕп редактор çумĕнче Л.Таллеров çанă таварса ĕçлеме пуçларĕ. Техредактор вырăнне çамрăк прозаика шанса патăмăр.

Редакци машинистки те айăпа кĕни паларчĕ. Вăл, ĕç урăхла çаврăнса каясса туйса, хăй ирĕкĕпех тепĕр çĕре куçрĕ. Çапла вара журнал редакцийĕн çĕнĕ те пултаруллă, хастар та пуçаруллă ушкăнĕ йĕркеленчĕ. Ку коллективпа эпĕ пилĕк çула яхăн ĕçлерĕм, пурне те ырăпа çеç асăнатăп. Пĕр çын пек туслăн, журналăн кашни номерне çĕнĕлле, вулакансене килĕшмелле калăпласа кăларас тесе тăрăшаттăмăр.

ЖУРНАЛ ТИРАЖĔ ÇИНЧЕН

– Хăвăрăн ĕмĕтĕре пурнăçларăр-и?

– Мĕн пирки?

– Журнал тиражне асăннăччĕ эсир...

– Пурнăçларăмăр. Каларăм ĕнтĕ, журнал тиражĕ эпĕ тĕп редактора пынă чухне 34 пине çитнĕччĕ, пилĕк çул хушшинче унăн тиражĕ тепĕр çавăн чухлĕ ÿсрĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçат тиражне хăваласа çитрĕмĕр çеç мар, иртсе те кайрăмăр. «Тăван Атăл» журнал Пичет çуртĕнче тухакан хаçатсемпе журналсенчен чи тупăшли пулса тăчĕ. Çавăн пирки журнала сакăр пÿлĕм уйăрса пачĕç, пÿлĕмсенче пĕрер сотрудник кăна ларса ирĕклĕн ĕçлеме тытăнчĕ. Ирĕксĕрех хамăр журнал тиражне союзлă тата автономиллĕ республикăсенче тухакан литература журналĕсен тиражĕсемпе танлаштарса пăхрăмăр. Чи малта тутарсен «Казан утары» журналĕ пырать иккен, тиражĕ 100 пинрен иртнĕ. Нимĕнле союзлă республикăра та пирĕн журналпа танлашма мар, çывăха пыраканни те çук. 10-15 пинлĕ тиражсемпе çеç тухаççĕ унта литература журналĕсем. Уйрăмах «Украина» журнал 18 пин çеç тухни тĕлĕнтерчĕ. Тăван халăх çыннисене пирĕн журнала 70 пине яхăн çырăнса илнĕшĕн, ăна юратса вуланăшăн темĕн тери тав тăвас килчĕ. 50 çул тултарнă ятпа журнал «Хисеп палли» орден илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çав ятпа чаплă ларăва пухăннă хамăрăн вулакансене хăйне евĕрлĕ билетсем патăмăр: унăн пĕр страницинче «Тăван Атăла» Совет Союзĕнче чăвашсем ăçта-ăçта çырăнса илнине кăтартрăмăр. Питĕ интереслĕ, чуна савăнтаракан таблица пулса тухрĕ: «Тăван Атăл» Чукоткăна – 20 экз., Сахалина – 25 экз., Якутска – 10 экз., Украинăна – 125 экз., Казахстана – 130 экз., Мускава – 75 экз., республика тулашне пĕтĕмпе 35 пине яхăн экз. каять иккен. Тĕлĕнмелле! Пире аслă

çĕршывăн чи инçетри кĕтесĕсенче вулаççĕ. Юнашар вырнаçнă республикăсемпе облаçсене асăнмастăп та!

Редакцинче ĕçлекенсем куллен кунах ялсене тухса çÿрет-чĕç, вулакансемпе тĕл пулатчĕç, журналта тухнă романсемпе повеçсем тăрăх конференцисем ирттеретчĕç. Ку та, паллах, «Тăван Атăл» тиражне ÿстерме пулăшнă.

– Апла пулсан çĕнĕ, илемлĕ произведенисем ытларах пичетлеме пуçларăр ĕнтĕ...

– Ку пирĕн ĕçри тĕп тĕллев пулса тăчĕ. Редакци арчинче мĕн пуррине тишкерех пăхса тухма тиврĕ. Сăвă-калав чылай, анчах ун чухнехи пурнăçа, ĕçе, пултаруллă çынсене сăнарласа кăтартаканнисем çукпа пĕрех. Вулакан чунне хускатма, ăна тыткăнлама пултараканнисем пачах курăнмаççĕ. Редакци ĕçĕн планĕ те çук. Çавăнпа паллă та ăста писательсем патне çырусем ярас терĕмĕр: мĕн пама пултараççĕ вĕсем пирĕн редакцисене, мĕнле повеçсемпе романсем, поэмăсем çырма шутлаççĕ? Часах редакци пÿлĕмĕсенче сумлă çыравçăсем, вулакансем лайăх пĕлекен поэтсем, публицистсем курăнса кайрĕç. Ал çырăвĕсем илсе килеççĕ, ĕмĕт-шухăшсене каласа кăтартаççĕ... Çапла çуралчĕç редакцин пилĕк çуллăх тата çулталăк планĕсем. Вулакансем писательсен произведенийĕсемпе пĕрле вĕсен сăн ÿкерчĕкĕсене пичетлеме, авторсен пултарулăх кун-çулĕпе кĕскен те пулин паллаштарма ыйтаççĕ. Лайăх сĕнÿ – йышăнтăмăр. Вулакансен тепĕр ырă сĕнĕвне те – поэтсен сăввисене икшерĕн-виçшерĕн мар, туллинреххĕн, пысăк ярăмсемпе пичетлессине – пурнăçлама тытăнтăмăр. Проза хайлавĕсене те – романсемпе повеçсене – кашни номерте пысăкраххăн пама пуçларăмăр. Ку çĕнĕлĕхсене ырлакан çырусем килме тытăнчĕç вулакансенчен, çыравçăсен пултарулăхне, ăсталăхне, вĕсем мĕнле пурăннине, мĕнле ĕçленине, мĕнле сывлăшпа сывланине, самана ыйтăвĕсене хăйсен хайлавĕсенче пурнăçланине е пурнăçламаннине лайăхрах курма май пур халĕ тесе хаклама вĕсене еплерех хайлавсем килĕшни е мĕншĕн килĕшменни çинчен пĕлтерме тытăнчĕç вулакансем. Редакци çумĕнче хастарлă, журнала вулакансен кăмăлне тивĕçтермелле кăларас тесе тăрăшакан авторсен ушкăнĕ йĕркеленсе çирĕпленчĕ.

– Çав çулсенче «Тăван Атăлта» пичетленнĕ произведенисенчен хăшĕсем уйрăмах сирĕн асăрта юлчĕç?

– А.Емельяновăн «Хура кăрăç» тата «Шăнкărав курăкĕ» повеçĕсем, И.Вашкин «Мускава хÿтĕлесе», Л.Таллеровăн «Çĕлтăр витĕр çул курăнать», Хв. Уярăн «Чăнкă çыран» романĕсем, В.Игнатьевпа А.Савельевăн чекистсем çинчен çырнă «Кăвак хуппи уçăлсан» романĕ, Л.Агаковăн «Чи хакли», А.Афанасьевăн «Юманлăх çулçă тăкмарĕ», Г.Красновăн «Телей патне виçĕ çухрăм», И.Лисаевăн «Тивĕç», М.Юхман «Эткер» романĕсем, Хв.Агиверăн «Сар ачапа сарă хĕр», В.Алентейĕн «Сар çÿçеллĕ сарă тутăр», В.Енĕшĕн «Çулçă айĕнчи çырла», Н.Мартыновăн «Ыраш шăркана ларсан», А.Медведевăн «Сарă тулă», В.Погильдяковăн «Курай», В.Ухлин «Хĕрсем пир тĕртеççĕ» повеçĕсем, çамрăк авторсен калавĕсем, Ахун Валем, Ю.Виръял, М.Волкова, А.Галкин, В.И.Давыдов-Анатри, Г.Ефимов, Н.Исмуков, А.Кăлкан, А.Лукин, Л.Мартьянова, Г.Орлов, Ю.Сементер, М.Сениэль, Н.Теветкел, В.Тимаков, В.Урдаш, Г.Чаржов, П.Эйзин, Р.Сарпи, В.Эндип, А.Эсхель, А.Юман, М.Юхма, П.Ялкир тата ытти поэтсен поэмисемпе сăвă ярăмĕсем. Асăннă произведенисенчен чылайăшĕ чăваш литература аталанăвĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕç.

Çавăн пекех Г.Желтухинăн «Юханшывăн – ик çыран» очерксен ярăмĕ журналăн 12 номерĕнче тухрĕ. В.Каховскин чăваш халăхĕн историллĕ кун-çулĕ çинчен çырнă очерксем те вулакансене килĕшрĕç.

– Тĕп редакторта ĕçленĕ çулсенче хăвăр мĕн тума шутланине пĕтĕмпех тума май килчĕ-и?

– Çук, шел пулин те, хăш-пĕрисем пурнăçланмасăрах юлчĕç. Тĕслĕхрен, критикăпа библиографи пайне вăйлатасси çинчен редколлеги ларăвĕсенче те, сотрудниксен пухăвĕсенче те пĕрре çеç мар сăмах хускататтăмăр, çапах та пай авторĕсем ниепле те йышланаймарĕç. Тăван литература мĕнле аталанса пынине, унăн çитĕнĕвĕсемпе ситменлĕхсене тарăннăн тĕпчессине йĕркелерĕмĕр. Уйрăм писательсен пултарулăхне тĕпчесси тивĕçлĕ шая çитеймерĕ...

– Литература журналне кăларасси – питĕ кăткăс ĕç. Мĕн уйрăмах асра юлчĕ?

– Журналăн çур ĕмĕрне чыслани. «Тăван Атăл» сумлăхне малалла ÿстерес шута чикĕ леш енчи паллă общество деятелĕсемпе çыхăну йĕркелесе яма йышăнтăмăр. Ку енĕпе юбилей питĕ лайăх йÿтĕм пулчĕ. Малтанласа Мозамбикăн (Африкăра социализм тума пуçланă çĕршыв) Совет Союзĕнчи посолĕ Ипполитту Патриссиу, Куба оборона министрĕ Рауль Кастро, Хĕвел тухăç Германири СЕПГăн Политбюро членĕ Фишер, Венгрин премьер-министрĕ Янош Кадар патне çырусем ятăмăр. «Тăван Атăл» журнал 50 çул тултарнă май вĕсем пире малашнехи ĕçре мĕн сунаççĕ? Миршĕн кĕрешекенсен юхăмне мĕнле шăпа кĕтет? Пирĕн çĕршывпа хăйсен çĕршывĕ хушшинчи çыхăнусен аталанăвĕ пирки мĕн шутлатăр? Çакăн пек виçĕ ыйту патăмăр кашнине. Малтан пĕтĕм тĕнче пĕлекен çак паллă çынсем пире хурав парасса та редакцинче нумайăшĕ шансах кайманччĕ. Çапах та вĕсем йăнăшрĕç. Пĕрремĕш хурав Ипполитту Патриссиуран çитрĕ. Питĕ кăмăллă çыру. «Тăван Атăл» журнала юбилейпе саламланипе пĕрлех чăваш халăхне те ĕçре пысăк çитĕнÿсем тума çирĕп сывлăх сунать. Çырнипе çеç çырлахман Мозамбикăн Черезвычайлă посолĕ, хăйĕн сăн ÿкерчĕкне те ярса панă. Эпир, пĕрремĕш хурава илнĕшĕн савăннăскерсем, посол çырăвĕпе сăн ÿкерчĕкне çийĕнчех журналта пичетлесе кăлартăмăр. Унтан Кубăран, Венгринчен, Хĕвел тухăç Германирен саламлă, туслă çырусем çитрĕç, виççĕшĕ валли те журнал страницисенче вырăн тупрăмăр.

Анчах унашкал ĕç ялан кал-кал пымасть. Шăпах çав вăхăтра çĕн йĕркелÿ тапхăрĕ пуçланчĕ. КПСС Тĕпкомĕ тĕнчери прогрессивлă паллă çынсене пирĕн çĕршывра тухакан журналсен ĕçне хутшăнтарасси çинчен йышăннă постановлени хаçатсенче пичетленсе тухрĕ. Миршĕн, вăрçă чĕртме тăрăшакансене хирĕç кĕрешекен обществăн паллă çыннисенчен, патшалăхсен ертÿçисенчен, тĕрлĕ парти деятелĕсенчен интервью илме, вĕсен статйисене журналсенче пичетлеме сĕннĕ унта. Постановление тĕплĕн вуласа тухрăмăр та редколлеги ларăвĕнче ăна пурнăçланă çĕре «Тăван Атăлăн» та хутшăнма май пур терĕмĕр. Ара, журналăн кашни номерĕнче пĕтĕм тĕнче пĕлекен пысăк сумлă çын статйи

е унпа калаçни пичетленсен, журнал пĕлтерĕшĕ те, вулакансен йышĕ те ÿсме пултарать-çке. Тата публицистика пайĕн ĕçĕ те палăрмаллах вăйланать. Редколлеги ман прогрессивлă паллă çынсен списокне туса хатĕрлеме хушрĕ. Çав список тепĕр уйăхран хатĕр пулчĕ. Унта кĕртнĕ çирĕм çынна Çĕр чăмăрĕ çинчи мире епле майпа тĕреклетсе пырасси çинчен виçĕ ыйту парас терĕмĕр. Çав списокра Францири компартийĕн генсекĕ Ж.Марше, США компартийĕн генсекĕ Г.Холл, Итали компартийĕн генсекĕ П.Тольятти, Инди премьер-министрĕ Индира Ганди, Кипр президенчĕ Л. Киприяну, Португали премьер-министрĕ Гомеш генерал, Индонези президенчĕ Сухарто, Мексика ял хуçалăх министрĕ Енрике Гош Самоко тата ыттисем те. Хальхинче хуравсене икĕ уйăх ытла кĕтрĕмĕр, анчах пĕр çыру та килмест. «Кама кирлĕ чăваш журналĕ? Никамран та хурав килмест», – текелеме тытăнчĕ редакци секретарĕ Н. Григорьев. Вăл çапла каланă кун, кăнтăр иртсен, почтальон пирĕн редакцие темиçе çыру илсе пычĕ. Çавсенчен пĕри уйрăмах хытă интереслентерчĕ. Редакци Мексика ял хуçалăх министрĕ патне янă çыру пулчĕ вăл. Ăçта кăна пулса курман-ши мăнтарăн çырăвĕ? Йĕрки унта çапла-ши? Конверт çинче вун тăватă штамп шутласа кăлартăмăр. Министра шыраса почтальонсем ăна 14 кантура çитернĕ, хуçине тупайман пулсан та ниçта та кăларса ыватман, каялла ярса панă. Вăл çырăва курма ытти журналсемпе хаçатсен сотрудникĕсем те пĕр вăхăт пыра-пыра çÿрерĕç. Ыттисенчен хуравсем икĕ уйăха яхăн кĕтрĕмĕр. Çапах та шанчăка çухатмарăмăр-ха, парти обкомĕнчен пĕррехинче телефонпа чăнкăр-р! тутарчĕç. Мĕнле çырусем çыратăр эсир чикĕ леш енне теççĕ. КПСС Тĕпкомĕн Постановленине пурнăçласшăн тăрăшатпăр тетĕп. Мускав журналĕсем ун пек тăваççĕ-и тесе ыйтаççĕ. Курман, тетĕп, пирĕн хамăрăн та пуç пур, постановленире журналсен пурнăçламалли ĕçсем çинчен тÿрремĕнех каланă-çке тесе хушса хуратăп. Мускавсем нимĕнле пуçару туман тăк мĕншĕн чăваш журналĕн мала сикмелле? Вун тăхăр çырăвне те яма тăхтас пулать тесе сĕнчĕç çÿлтен. Вара тинех паллă пулчĕ: пирĕн çырусене республикăран ниçта та кăларса яман, çавăнпа хуравсене те эпир кăлăхах кĕтнĕ... Анчах мĕнле майпа çирĕммĕш çырăвĕ Шупашкартан тухса кайса çур тĕнче тавра çавраннă хыççăн Шупашкарах таврăнма пултарчĕ – ниепле те тупаймарăмăр çакăн тупсăмне.

ПУШАРТАН ХĂРАНĂ ПЕКЕХ ШИКЛЕНЕТЧĔÇ

– Ун чухне парти обкомĕ пур енĕпе те пуç пулса тăнă çав... Журнал материалĕсене цензорсем хытă тĕрĕсленĕ теççĕ. Тĕрĕсех-и?

– Тĕрĕсех. «Тăван Атăлăн» çур тиражне касса ваклама тиврĕ пĕррехинче. Ĕçе çапларах пулса иртрĕ. Редакцие Антал Назул писатель прозăлла çăвăсен ярăмне йăтса пычĕ. Вуласа тухрăм.

«Тăван Атăл» тусĕсем: Николай Терентьев, Рашит Ахметов, Аяз Гилязов, Порфирий Афанасьев, Ренат Харис (1984 ç.)

Парти политикине хирĕç нимĕн те çук. Анчах ăсталăх енчен Антал Назул çăввисем чаплах мар, вуланăçемĕн такăнатăн. Унпа самай тавлашса калаçнă хыççăн пĕр чĕлхе тупрăмăр: автор «Тăван Атăлта» прозăлла çăвисен пĕр пайне пичетленипех çырлахать, ыттине уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларать. Редакци суйласа илнĕ сыпăкра тăван чĕлхепе унăн аталанăвĕ, ăна юратса вĕренесси тата унăн йывăр шăпи çинчен каланăччĕ. Темĕскер сиксе ан тухтăр тесе çапах та Назул çăввисене набора яриччен цензорсене кăтартса пăхма сĕнчĕ редактор çумĕ Лаврентий Таллеров. Темĕнле сисĕм пурччĕ унăн, ыттисен çукки. Хăех çăвăсене цензорсем патне вулаттарма илсе кайрĕ. Сÿрĕкрех куçпа, пусăрăннă кăмăлпа таврăнчĕ вăл унтан. Пичетлеме ирĕк памаççĕ, икĕ çăмахран тăракан çăмах майлашăвĕ çине тăрăнчĕ тет. Чăваш чĕлхине аталанма условисем сахалтарах тенине хирĕç имĕш вĕсем. Мĕн тумалла? Назул чирлĕрех çын, ку сыпăка та пичетлемесен вăл чирлесех каять терĕç редколлеги ларăвĕнче. Цензорсене килĕшмен предложение пĕтĕмпех кăтĕртес те ыттине пичетлес терĕç. Н.С.Дедушкин çеç хирĕç пулчĕ – юратмастчĕ вăл кăшт ирĕклĕрех сывлама юратакансене. Назул çăввисене журнал варринчи икĕ страницăна лартса унăн тиражне пĕтĕмпе пичетлерĕмĕр. Çапах та инкекех лекрĕмĕр: журнала «çутта» кăларма ирĕк ыйтса алă пустарма кайсан цензура Антал Назул çăввисенче каллех «хирĕçле» çăмахсем тупнă: «тăван чăваш чĕлхине вăйлăрах аталантармалла» тенинче вĕсем националистла шухăш тупнă. Ун пек шухăшсенчен вара вĕсем пушартан шикленнĕ пекех хăратчĕç. «Касмалла, пĕтĕм тиража касса вакламалла та Назул çăввисене кăларса журнал тиражне çĕнĕрен çапмалла», – терĕç. Нимĕн тумалли çук, итлемелле цензор хушăвне. Ирĕксĕрех редакци сотрудникĕсем, типографи рабочийĕсем çур тиража пĕр кун – иртен пуçласа каçчен – вакларĕç. Эпĕ те анса куртăм ку килпетсĕр ĕçе, мана та явăçтарасшăнччĕ, анчах кунашкал ĕçе тума алă çĕкленеймерĕ... Ăсларах, чеерех çынсем те тупăнчĕç. Типографин производство пайĕн пуçлăхĕ, уçă кăмăллă вырăс хĕрарăмĕ (хушамачĕпе ятне халĕ астăваймастăп) мĕншĕн пĕтĕмпе вакламалла, республика валли çĕн-

ĕрен пичетлеме сĕнетĕп, республика тулашне кивĕ тиражне çаплипех ямалла, унта «националистсем» çук тесе хучĕ. Унăн сăмахĕ пурне те килĕшрĕ. Чăвашра Антал Назул сăввисемсĕр тухрĕ «Тăван Атăл», Тутарстана (вăл унти Тăхăрьял енченччĕ) тата ытти облаçе 30 пине яхăн экземпляр унăн сăввисемпех ăсанчĕç...

«ĔМĔР ТИКĔÇ КИЛМЕСТ» РОМАНĂН ТИКĔÇ МАР ШĂПИ

– Георгий Васильевич, «Тăван Атăлта» ĕçленĕ чухне темĕн те курма тивнĕ сирĕн, пурнăçăрта ун пеккисем пулман-и?

– Мĕншĕн пулман? Пулнă. Тĕслĕхрен, «Ĕмĕр тикĕç килмест» романшăн мана кунта Çеçпĕл Мишши премийĕн лауреачĕ ятне пачĕç. Чăвашла уйрăм кĕнекепе кăларма хатĕрленнĕ вăхăтра ăна вырăсла «Современник» издательствăра кăларма сĕнчĕç. Ятăм подстрочник. Анчах Мускавран роман пирки питĕ хăрушă рецензи килчĕ. «Этот роман может быть издан только с разрешения идеологической комиссии ЦК КПСС», – тесе çырать рецензи авторĕ. Роман ал çырăвĕ «Современникра» редакторсене килĕшнĕ, анчах ăна идеологи комиссине ярсан вăл нихçан та кун çути кураймасть теççĕ. Мана рецензент шухăшĕсемпе килĕшменни çинчен хурав çырма сĕнчĕç малтан. Отпуск илтĕм те Кăкшăмри Писательсен çуртĕнче икĕ эрнере 35 страницăллă хурав çыртăм. «Современникра» вăл питĕ килĕшнĕ, ку таранччен кунашкал тĕплĕн çырнă çыру-хурав авторсенчен илме курманччĕ-ха терĕç производство канашлăвĕнче», – пĕлтерчĕ Н.Попов редактор. Авторне епле те пулин пулăшас пулать тенĕ имĕш унта. Таçта та ырă çынсем пур. Ман романа ун чухне СССР Писательсен союзне ертсе пыракан Г.Марков юлташне Н.М.Почивалина кăтартса пăхаççĕ. Вăл романа кăмăллать, куçарма та килĕшет. Çапла майпа роман вырăсла хăйĕн ятне улăштарса «Тают снега» пулса çĕр пин тиражпа тухать. Тиражăн тĕп пайне Шупашкара ярса пачĕç, вулакансем ăна икĕ эрнерех туянса пĕтерчĕç.

КУЛЬТ ВĂХĂЧĔ ÇИНЧЕН...

Вăт çавăн чухне хамăн ачалăхра пулса иртнĕ пăтăрмахсем, анне хушăран кĕскен каласа кăтартнисем çине тинкеререх, çĕнĕ куçпа пăхма тытăнтăм. Культ вăхăчĕ пирĕн çемьене самаях асаплантарнă иккен. Аттене Хĕрлĕ Чутая чĕнтере-чĕнтере кайнине хушăран çеç асăнатчĕ анне, «ачасене кăшт ӳстерсе хăварасчĕ, такам ман çинчен хамăр ялтанах элексем çырать, тен, часах Чутайран киле те ямĕç», – тенĕ атте. Вăл ун чухне таврари чи чаплă столяр пулнă май, Тури Çĕрпӳкасси шкулĕнче ĕç учителĕнче ĕçленĕ. Аннене вун çиччĕрех Элĕк районĕнчи Вылпасар колхозĕн председательне суйланă. Малалла учителе вĕренес ĕмĕтпе пурăннă пулин те, ăна председательтен кăлармаççĕ. Вара ман кукка, аннен пиччĕшĕ, Шупашкарта педрабфак директорĕнче ĕçлекенскер, аннене Чулхулана автогиганта ĕçлеме кайма сĕнет. Унта ĕçленĕ хыççăн тин вăл Шупашкарти педрабфака вĕренме кĕрет, унăн директорĕ тăван пиччĕшĕ пулнине те калаттармасть кукка. Ытла таса чунлă çынччĕ пичче тесе асăнатчĕ анне, кукка ăна «профессорсен çуртĕнче» (дом профессуры) хăйĕн висĕ пӳлĕмлĕ хваттерĕнчех усрать. Çав çуртрах обком секретарĕ С.П.Петров пурăнатчĕ, куккупа иккĕшĕ часчасах шахматла вылятчĕç тетчĕ анне. Педрабфак пĕтерсен анне малтан Элĕк районĕнчи Юманлăхри шкулта ачасене вĕрентет. С.П.Петрова айăпласа хупсан кукка та хăрушлăха сиснĕ пулас, педрабфакри ĕçе хăварса Тĕрлĕ района куçа-куçа роно ертӳçинче ĕçлет: Хĕрлĕ Чутайра, Елчĕкре, Комсомольскинче, Канашра... Аннене те Юманлăхран тăван ял çывăхнерех, Вылпасарĕнчен висĕ çухрăмра вырнаçнă Йĕрхкасси (пирĕн ял) шкулне ĕçлеме куçма пулăшать. Унтах аннепе атте пĕрлешеççĕ, анчах хăрушлăха та сисеççĕ. Çĕнĕ Советски районĕ туса хурсан пирĕн ял унта кĕрет. Атте вăрçа умĕн пиччĕшĕ патĕнчен (амăшĕсем аттен те, аннен те вĕсем икĕ çула çитиччĕнех вилнĕ) уйăрлса тухса пӳрт лартма ĕлкĕрет, саккăрмĕш кунĕнчех вăрçа илсе кайнă пирки хапха алăкне тума çеç ĕлкĕрет, анчах тăррине витеймест (ăна эпĕ Çĕрпӳре агронома вĕренсе тухса 18 çултах колхоз агрономĕнче тата председатель çумĕнче ĕçлеме тытăнсан витрĕм). Атте вăрçăра вилет, аннене тинех шикленсе пурăннă хăрушлăх çитсе çапать: ăна хамăр ялти шкултан ĕçрен кăларса вăтăр çухрăмра вырнаçнă Мăн Чураш шкулне куçма хушаççĕ. Эпĕ ун чухне тăватă çула кĕнĕ, шăллăм – иккĕре, анне халь çеç лартнă çурта пăрахса 30 çухрăма куçмасть, колхозра ĕçлеме тытăнать. Ун вырăнне вара 9 класс пĕтернĕ Тури Ачак ачине учителе лартаççĕ... Аннен шăллĕ Советскинчи вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен хăйĕн ирĕкĕпе вăрçа каять. Пуçне хурать. Унпа пĕрле вĕреннĕ пирĕн ял ачи Берия ертсе пыракан органăн районти уполномоченнăйĕ пулса тăрать... Ай-яй! кăтартрĕ вăл культ вăхăчĕ! Çăкăр та техникума вĕренме кĕрсен тин пĕрремĕш хут çисе куртăм, çичĕ çул хушшинче пĕр кĕнеке алăра тытса курайманрăм, тетрадьсене çеç анне тутăрĕпе çурăм хыçне çыхса çӳреттĕм. Уфф, аса илсен, халĕ те чĕре пусăрăнса килет, ачамсем çеç унашкал пурнăçа ан курччăрччĕ!

– Георгий Васильевич, йывăр асаилӳсенчен хăтăлар-ха. «Тăван Атăл» патнех таврăнар.

– Таврăнар. Çемçелтĕм, каçарăр. Эпĕ, темĕнле йывăр пулсан та, малалла пăхма хăнăхнă. Анне çапла вĕрентнĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр. Чĕре ыратнипе пирĕнтен иртерех уйрăлса кайрĕ, 90-мĕш çулсенчи ахăр саманана курмарĕ. Ку – лайăх. Маншăн унран хакли никам та çук. Сывлăшăм тухма чарăниччĕнех ăна асăмран кăлармастăп.

МЕСЕРЛЕ ВĔÇЕКЕН ХУР КАЙĂКСЕМ

– Журнал ĕçĕнче, паллах, темĕн те курма тивет...

– Тивет, чăнах та. Çултaлăк ĕçлесен ман ĕç пӳлĕмне В.Игнатьевпа А.Малов кулкаласа кĕчĕç, аллисенче иккĕшĕн те – журналăн уçнă хуплашкисем. «Мĕн куратăр?» – тесе ыйтаççĕ. «Хур кăвакалсем вĕçеççĕ», – тетĕп. «Мĕнле вĕçеççĕ?» – теççĕ пĕр-пĕрне чеен пăхса илсе. Тинех тимлесерех пăхрăм та, куçăм чарăлсах кайрĕ: хур кайăксем месерле вĕçеççĕ иккен! «Асăрхарăр эппин, çак кайăксем журнал хуплашки çинче месерле вĕçме пуçлани пилĕк çул та иртрĕ ĕнтĕ. Сирĕн умĕнхи редактора хуплашкана улăштарма темиçе те сĕннĕ эпир, анчах вăл обкома кайма шикленчĕ, пĕрре типографире месерле лартса янă та...

Мĕнле кăна тĕлĕнтермĕш пулса иртмест пурнăçра! Хăварт кăна редколлеги ларăвне пухрăмăр. Редколлеги

членĕсене кайăксем мĕнле вĕçнине кăтартатăп. Ку таранччен никам та асăрхаман. Н.С.Дедушкин аллисемпе пĕççе çапса хулăн сассипе ахăрма тытăнчĕ. «Çӳле» çӳреме юратаканскер хăвăртрах обкома каймалла тет. Редколлеги «Тăван Атăлăн» çĕнĕ хуплашкине ӳкерме йышăнчĕ. Тепĕр уйăхран Элли Юрьев художник хуплашкан пилĕк вариантне ӳкерсе те пырса пачĕ. Эпĕ, иккĕшне суйласа илсе, обкома çул тытрăм. Кĕретĕп. Хур кайăксем месерле вĕçнине, Элли Юрьев хуплашкисене кăтартатăп. «Вулакансенчен çăхавсем килнĕ-и?» – ыйтаççĕ манран. Эпĕ çавара карса пăрахрăм пулас: «Эсир шӳтлеместĕр-и?» – тетĕп. «Шӳтлеместпĕр. Тата Мускав журналĕсем хуплашкисене улăштараççĕ-и?» – тесе ыйтаççĕ. «Хур кайăксем месерле вĕçни çинчен пĕр çăхав та çук. Мускав журналĕсем, «Юностьсăр» пуçне, хуплашка улăштарнине ку яхăна асăрхаман», – тесе хуравлатăп Э.Юрьев хуплашкисене редколлеги ырланине пĕлтерсе. «Элли Юрьев хуплашкисем лайăххах-ха, анчах хур кайăксем те месерле чиперех вĕçеççĕ. Хальлĕхе пĕр çăхав та çук. Хуплашка улăштарсан сăлтавне ăнлантарма тивет. Вара хур кайăксем месерле вĕçнине пурте асăрхĕç, кулма тытăнĕç. Эсĕ, Георгий Васильевич, тепĕр чухне ытлашши вĕриленен. Хур кайăксене месерле вĕçме канлĕ пулас. Хальлĕхе хуплашка улăштарас мар, месерлех вĕçчĕр, мĕншĕн чарас?»

Çавăн пек сумлă çуртра хур кайăксем çинчен çапла калаçнинчен тĕлĕннĕрен е сасăпа кулса ярас мар, е пысăк пуçлăхсем умĕнчех тӳнсе каяс мар тесе, «Тăван Атăл номерĕсемпе Элли Юрьев ӳкерчĕкĕсене сĕтел çинчен йăпăряпăр пуçтартăм та коридоралла вирхĕнсе тухрăм... «Тăван Атăл» хур кайăкĕсем эпĕ тĕп редактортан писатель-профессионала тухсан çеç хам вырăна сĕнсе хăварнă Л.В.Таллеров тĕп редактора ларсан тин месерле вĕçме чарăнчĕç, çĕнĕ редактор Н.Дедушкина итлемен, çĕн йĕркелӳ ирĕклĕхпе усă курса хур кайăклă хуплашкана тӳрех, обкома каймасăрах, Элли Юрьев хуплашкипе улăштарнă.

– Георгий Васильевич, юлашкинчен сирĕншĕн пĕр кĕтмен ыйту. «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакцийĕнче ĕçленĕ çулсенче эсир сотрудниксене выговор парса курнă-и?

– Мĕншĕн? Ун пек хăтланма пирĕн хушăра пĕр сăлтав тупăннине те астумастăп. Пурччĕ пирĕн пĕр çын. Пĕр вăхăтра редакцин машинистка пулмарĕ. Ку вара ал çырусене вăхăтра пичетлесе типографине антарма самай чăрмантарать. Çавăнпа вăхăтлăха редакцие ялан пырса çӳрекен Н.Любимова машинистка ĕçĕсене тума йышăнтарас терĕмĕр. Анчах сасартăк пĕр чăрмав сиксе тухрĕ: арçын пулнă май ун пирки приказра машинистка тесе çырма çук. Мĕнле майлаштармалла? Шухăшласа тупрăмăр вара: «Н.А.Любимова «Тăван Атăл» журналăн машбюро пуçлăхне лартас», – терĕмĕр приказра. Наум Андреевич кăна вуласан савăннине пытармарĕ: «Тавтапуç. Миçе машинистка ĕçлет машбюрора?» – тесе ыйтать. Пичетлекенни те, ăна ертсе пыраканни те хăв пулатăн тесе ăнлантартăмăр. Хаваслă çынччĕ Н.А.Любимов, ăна-кăна ăнланчĕ те ахăлтатсах кулса ячĕ. Унтан куçне чеен хĕссе илчĕ те: «Арăма урăхларах калатăп: «15 машинисткăран тăракан машбюро пуçлăхне лартрĕç. Унăн умĕнчи авторитетăм ӳсет-ха капла...» Те хытă савăннăран, те «пуçлăха» темĕн те тума юрать тесе, хайхи Н.А.Любимов кăшт вăхăт иртсенех виçĕ кун ĕçе пыраймарĕ. Сăлтавне пытармарĕ: «Хамăн юлташсемпе пĕрле мана «чаплă» вырăна лартнине çурăмăр...» Мĕнле наказани памалла? Вăл мĕнле тайкаланса утнине Пичет çуртĕнче те куракансем пулкаланă... Çапах та çынни сумлă, нумай вĕреннĕ, Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче пулнă, редакцинче ĕçлекенсенчен чи асли... Çакăн пек приказ çыртăм вара: «Ĕç йĕркине пăснăшăн Н.А.Любимова Пичет çуртне хирĕç вырнаçнă наука тĕпчев институчĕн сехечĕ мĕнле çӳренине виçĕ уйăх хушши кашни кун 9 сехетре тĕрĕслеме хушас, редакцинче ĕçлекенсен сехечĕсене çав вăхăтпа шайлаштарма сĕнес». Ку приказ ăна питĕ килĕшрĕ пулас, виçĕ уйăх иртсен те институт сехетне сăнама чарăнмарĕ «машбюро» ертӳçи...

Çапла хавасланса, ăмăртуллăн çĕкленсе, пĕр-пĕрне ялан пулăшса ĕçлеттĕмĕр çав çулсенче.

П. НУХРАТОВĂПА
Н. ОСИПОВА çырса илнĕ

Тăван журнал çывăхлатать

Аякри Çурçĕре те «Тăван Атăл» журнал тухма пуçланăранпа 75 çул çитни çинчен сас-хура çитрĕ. Эппин йышăнсамăр ентешсен хĕрӳ саламне.

Ку тăрăха эпĕ хамăн мăшăрпа 1978 çулта куçса килтĕм. Пире хапăл туса кĕтсе илчĕç, тӳрех хваттер пачĕç. Советски хулинчи вăрман хуçалăхĕнче инженерта вăй хума пуçларăм. Арăм валли йывăç япаласем кăларакан комбинатра ĕç тупăнчĕ.

Пурте аванах пек. Шалу начар мар илетпĕр, чăвашра кун пек укçана тытса курас çук. Анчах тăван еншĕн, тăван чĕлхешĕн хытă тунсăхлаттăмăр, кунти çанталăк та пире килĕшсе каймастчĕ. Тунсăха сирес тесе эпир «Тăван Атăл» тата «Ялав» журналсем çыранса илме шутларăмăр. Тăван кĕтес çывăхланнă пек туйăна пуçларĕ унта пичетленнĕ сăвă-калава вуласан. Малтанхи тапхăрта килĕшнĕ йĕркесене пĕрле сасăпа та вулаттăмăр.

Хальхи ĕç-пуç çинчен мĕн калас? Çурçĕрте 30 çула яхăн пурăнатпăр ĕнтĕ. Кунти хаяр сивĕсене те хăнăхрăмăр пуль, 45-50 градуса та чăтса иртеретпĕр. Тата кунти сывлăшра кислород питĕ çитмест, тĕп йывăрлăх çакă. Анчах çакă та пире тахçанах хăратмасть. Чăтатпăр, çакăншăн пире ĕç укçи çумне 70 процент хушса тӳлеççĕ.

Эпир пилĕк ача пăхса çитĕнтертĕмĕр. Вĕсем пурте аслă пĕлӳ илчĕç, çемьеллĕ пулчĕç, тĕрлĕ предприятисенче вăй хураççĕ.

Пурте çитет. Анчах ватăлнăçемĕн тăван кĕтесшĕн тунсăхлама пуçларăмăр. Кунти чăвашсене пухса ассоциаци тусан мĕнле аван пулмалла. Тутарсен çавнашкал пĕрлешӳ пур. Вĕсем пуçтаранса уявсем ирттереççĕ. Тутарсен ентешлĕхĕ çинчен вырăнти телевидени час-часах каласа парать.

Эпир пурăнакан Советски районĕнче вырăнти халăх — ханты-мансисем — пĕтĕмпе те 213 çын кăна. Чăвашсем вара

тăхăр çĕре яхăн. Мĕншĕн пирĕн пĕр чăмăра пĕрлешес мар?

Пултаруллă ентешсенчен чи малтанах Николай Кожанова асăнас килет. Вăл нефть кăларнă çĕрте ĕçлет, арăмĕ Нина суту-илӳре вăй хурать. Иккĕшĕ те Вăрнар районĕнчен. Вĕсен тупăшĕ те пĕчĕк мар пулас, нумаях пулмасть ют çĕршывра кăларнă чаплă автомашина туянчĕç.

Кунти чăвашсем Галина Елисеевăна аван пĕлеççĕ. Вăл Улатăр районĕнчен, кĕнеке сутать. Ун киоскĕ умĕнче яланах чарăнса тăратăп, тăван чĕлхепе киленсе пуплетпĕр кăмăллă хĕрарăмпа.

Тепĕр пултаруллă чăваш пирки каласа хăвармаллах. Петр Капитонов Çурçĕре Патăрьел районĕнчи Чемен ялĕнчен килнĕ. Кунти халăха вăл акă мĕнпе тĕлĕнтерчĕ: çурçĕрте те хурт-хăмăр ĕрчетме пулать иккен. Çуллахи вăхăтра тайгара чечеклĕ ывăç-курăк парка ӳсет. Хуртсем кĕске вăхăтрах пыл нумай пуçтараççĕ, ăнăçлă çулсенче кашни вĕллерен 55-60 килограмм продукци илни те пулнă. Ĕçчен чăваш ача сачĕсене, пульницасене пыл нумай сутать. Ун опычĕпе паллашма вырăнти губернатор та килсе кайнăччĕ.

Çурçĕрти ентешсем пирки сăмах хускатсан Петр Волостригова асăнмаллах. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнче суралнă, Чăваш патшалăх университетне пĕтернĕ. Çар служби хыççăн кунта юлнă. Малтанах ăна район Совечĕн депутатне суйларĕç, кайран вырăнти Думăна ертсе пыракана çитрĕ. Халĕ Петр Станиславович Федераци Совечĕнче вăй хурать, комитет пуçлăхĕн çумĕ.

Çавăн пек пултаруллă çынсем татах та пур кунта. Вĕсене пĕр чăмăра пĕрлештересех пулать. Чăваш кĕнекисем, хаçат-журналĕсем килсе тăччăр пирĕн пата, чăваш кĕввисене çырнă кассетăсене тупса туянасчĕ. Вара пирĕн тăван çĕр аякри Çурçĕрпе çывăхланĕ.

«Тăван Атăл» журнала пĕр хушă сӳрĕкленсе темшĕн çырăнма пăрахнăччĕ. Халĕ çĕнĕрен илсе тăрас шухăш çирĕпленчĕ. Ентешсене те чĕнсе, вĕрентсе калатăп: çырăнăр!

Тепĕр хут журнал юбилейĕ ячĕпе саламласа сирĕн ĕçчен аллăрсене хĕрӳллĕн чăмăртатăп.

Михаил ВАСИЛЬЕВ, Йĕпреç чăвашĕ.
Тюмень облаçĕ, Советски хули

Пурин çинчен те шухăшлар

«Ялавпа» «Тăван Атăла» пĕрлештерсе пĕр журнал кăларма тытăнас татăклă утăм умĕнче тăратăр иккен. Аван! Ырлатăп, савăнатăп. Маттурсем! Пушшех те пикенерех ăшталанма тивет ĕнтĕ сирĕн. Мĕнех, аптрасах ӳкмĕр. Ĕçĕр ăнасса шанатăп. Турă пулăшса тăтăр сире, тăванăмсем!

Хам енчен сĕнӳ-асăрхаттарусем те пур. Чи малтан журналăн капашĕпе хулăнăшĕ пирки тĕплĕн шухăшламалла. Хуплашка ӳкерчĕкĕ те пĕлтерĕшлĕ пултăр. Иккĕмĕш самант: шрифт. Чаплă журнала вĕтĕ шрифт пăсать çеç. Произведени авторĕсен хушамачĕсене те кăмăллă шрифтпа памалла.

Журналта вак жанрсене те упраса хăварас килет. Ача-пăчасем валли те хайлавсем кирлĕ. Ман шутпа, кулăш та, шӳт те вырăнлă пысăк повеçсемпе романсем хушшинче. Унсăрăн яшкин тути купăста тути-йӳççи çеç пулĕ. Ахальтен мар пулĕ ĕнтĕ чăваш авалах пит меллĕн каланă: пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă, тенĕ. Мăйăр пирки каланă, ара, çакна. Каларăшĕ вара мăйăра кăна мар, темĕне те пырса тивет. Çав шутра — литературăри вак жанрсене те...

Тепĕр самант: пулас журналăн ячĕ пирки? Пĕр ят хăвармалла пуль. Ман шутпа, чи лайăххи, вырăнли, тăван çын пек тăванни, пĕртенпĕрре: «Тăван Атăл». Шухăшласа пăхăр. Шухăшлăр.

Петр ЛЬВОВ.
Чулхула облаçĕ

Кăмăлтан

«Тăван Атăлпа» «Ялава» пĕрлештерсе кăларнă номер питĕ чаплă пулса тухнă. Кăмăлтан!

Ӳлĕмрен журнал ячĕ мĕнле пулĕ-ши? Çĕнĕ ят хурсан та аван пек. Тен, икĕ журнала пĕрлештерсе тăракан пĕр ят тупăнĕ? Вăт ку тĕлĕнтермĕш пулĕ!

«Тăван Атăл» журнала 75 çулхи менелник ячĕпе саламлатпăр. Журналта чăвашла тухакан кĕнекесем çинчен ытларах реклама пама ан ӳркенĕр-ха. Мĕн хак вĕсем? Вĕсене ăçта туянма пулать? Калавсене ӳкерчĕксемпе илемлетсен журнал тата чапланса кайĕ.

Паллă кунсене кашни уйăхра кăларса пыни питĕ вырăнлă.

Ырлăх-сывлăх сунатпăр!

А.АЛЕКСАНДРОВА.
Елчĕк районĕ, Кивĕ Арланкасси

Пулăшсамăр

«Тăван Атăлта» пичетленекен мĕнпур хайлава питĕ юратса вулатпăр. Вĕсем пире вĕренӳре те пулăшаççĕ. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Светлана Владимировна Ларионова ятарласа «чăваш ачи» кружок та йĕркелерĕ. Çак кружокра эпир нумай-нумай калавпа сăвă тишкерсе тухатпăр.

«Тăван Атăл» журналта темиçе çул хушши «Шкул вулавĕ» ярăмпа уйăхсерен шкул программинче палăртнă писательсен произведенийĕсене пичетлесе пычĕç. Кăçал вĕсем темшĕн курăнми пулчĕç. Пире, вĕренекенсене, питĕ кирлĕ вĕсем! Вĕсене ниçта та тупса илме майсем çукçке. Пулăшсамăр, тархасшăн.

Алина Петрова.
Тутарстан, Кивĕ Çĕпрел районĕнчи
2-мĕш вăтам шкул

2*